Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

35 (7889) № ✻ Юн кун, 2011 ҫулхи ҫу (май) уйăхĕн 11-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## «Анчах-ха таврăнчĕҫ фронтран...»



Ҫулсем иртеҫҫĕ, анчах пирĕн асаттесем тунă паттăрлăх хакĕ ҫулсерен ӳссе пырать. Ачаччĕ эпир, яшчĕ, фронтовиксен хисепĕ вара сумлăрахчĕ. Анчах вăхăт хăйĕннех тăвать. Ăнланатпăр ҫакна, ҫавăнпа паян пурăнакан кашни фронтовик тĕлĕшпех ытларах тимлĕх уйăрма тăрăшатпăр.

Иртнĕ тунти кун та район центрĕнче халăх йышлă пулчĕ. Тăван Ҫĕршывăн Аслă вăрҫине хутшăннă 9845 ентешĕмĕртен 5491-шĕ ҫапăҫу хирĕнчен киле таврăнайманни – пирĕн паянхи мирлĕ пурнăҫ хакĕ. Ҫĕнтерӳпе таврăннисем те, юрăри пек каласан, анчах-ха таврăнчĕҫ фронтран... Ҫакна уяв митингĕнче район администрацийĕн пуҫлăхĕ Ю. Иванов уйрăммăн палăртса хăварчĕ:

– Ҫулсен утăмĕ шелсĕр. Паян районта Аслă вăрҫă участникĕсем 90-ăн пурăнаҫҫĕ. Вĕсемпе танлаштарнисем тепĕр 10 ҫын. Салтак арăмĕсем те 10-ăн кăна. Вĕсем паянхи мирлĕ пурнăҫшăн вута та, шыва та кĕнине шутласан тимлĕрех пуласчĕ пирĕн вĕсем тĕлĕшпе яланах. Ҫав ҫулсенчи хăрушă тăшмана ҫĕнтернĕ халăх паянхи йывăрлăхсем умĕнче те пуҫ усмасса шанатăп, – терĕ Юрий Александрович.

Муркашсене ЧР Президенчĕ, ЧР Правительстви енчен Ҫĕнтерӳ кунĕ ячĕпе республикăри патшалăх тĕп инженер-инспекторĕ В.П. Димитриев саламларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче паянхи ҫамрăксем те ашшĕсемпе аслашшĕсен паттăрлăхне сӳнме паманнине Афганистан, Чечня тĕслĕхĕсемпе ҫирĕплетрĕ:

– Паттăрлăх вăл ҫухалмасть. Аттесемпе асаттесем фашизма хирĕҫ тăрса ҫĕнсе илнĕ мирлĕ пурнăҫа эпир те ҫăмăллăнах аларан вĕҫертмĕпĕр. Ҫакна шанса аслă ăрурисем паян лăпкăн ҫывăрма пултараҫҫĕ, – терĕ хăйĕн сăмахĕнче Владимир Павлович.

Савăнăҫлă уяв шкулсенчи ҫарпа патриотика клубĕсен отделенийĕсен парачĕпе, «Ҫĕнтерӳ» паркĕнчи палăк умне чĕрĕ чечексем хунипе вĕҫленчĕ.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Район уй-хирĕсенче

**Ял хуҫалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуҫалăхĕсенче ҫурхи уй-хир ĕҫĕсем епле пыни (ҫу уйăхĕн 9-мĕшĕ тĕлне):**

– ҫурхи ака-суха ĕҫĕсем пĕрлешӳллĕ хуҫалăхсенче кунсерен вăй илсе пыраҫҫĕ. Ака кунĕсем ҫитнĕ май хуҫалăхсенче акмалли вăрлăха имҫамлассипе «ВаСем» (240 процент), Чкалов яч. хис. (135 процент), «Свобода»(50 процент) хуҫалăхсем, «Гея» общество (60 процент), «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики (35 процент), В. Бархаткин, В. Горбунов, А. Толстов, А. Пихтеров хресчен (фермер) хуҫалăхĕсенче ҫанă тавăрса ĕҫлеҫҫĕ;

– пур хуҫалăхра та ҫĕр улми вăрлăхне яровизацилеме кăларассипе тимлеҫҫĕ. Виҫĕм кун тĕлне районĕпе ăна 1930 тонна (79 процент) суйланă;

– хуҫалăхсем 1572 гектар ҫинче (24 процент) кĕрхи культурăсене апатлантарнă, 1812 гектар ҫинче (28 процент) сӳрелесе нӳрĕк тытса хăварнă;

– пĕрлешӳллĕ тата хресчен (фермер) хуҫалăхĕсем 1437 гектар (20 процент) нумай ҫул ӳсекен курăксене минераллă удобренисемпе апатлантарнă, 3670 гектар (51 процент) ҫинче сӳрелесе нӳрĕк тытнă;

– районĕпе ҫĕртме сухи тунă лаптăксене пурĕ 2169 гектар (39,5 процент) сӳреленĕ;

– районĕпе 850 гектар (9,5 процент) ҫурхи культурăсем акнă. Акнă лаптăксенчен 350 гектарне ҫурхи тулă, 450 гектарне урпа, 37 гектарне сĕлĕ йышăнать;

– Ильич яч. хис. хуҫалăхра 30 гектар пĕр ҫул ӳсекен курăксем акнă;

– «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра 20 гектар ҫĕр улми лартнă.

## Муркаш ҫĕнĕ тум тăхăнать



*Ҫулленех ҫурхи кунсем ҫитсе килнĕ май Муркаш урамĕсенче чечексем куҫа илем кӳме тытăннине хăнăхрăмăр ĕнтĕ. Кăҫал та Аслă Ҫĕнтерӳ уявĕ умĕн ҫак ĕҫе йĕркелерĕмĕр. Малтанлăха 3,5 пин тĕп чечек лартса тухрăмăр. Ку ĕҫе килĕшӳ туса ятарлă бригадăна явăҫтарнă. Е.Я. Волкова ертсе пынипе О.Н. Смородинова, Л.Н. Иванова, В.С. Никитина, Л.К. Строгова, Г.Н. Иванов чечексем лартас ĕҫе ответлăха туйса пурнăҫлаҫҫĕ. Пĕтĕмпе вара кăҫал 15 пин тĕпрен кая мар чечек лартса хăварма палăртатпăр.*

*Анчах ҫак илеме сыхласа хăварасси пирки те манма кирлĕ мар. Вăрттăнлăх мар, хăш чухне лартнă чечексем ҫине выльăхсене кĕртсе янă е таптаса пĕтернĕ тĕслĕхсене те курма пулать. Тĕрĕссипе каласан ку вăл ҫак илем ҫине сурни пулать. Манар мар: ку илем хамăршăнах. Ҫавăнпа та лартса хăварнă чечексене вăхăтран вăхăта шăварасси пирки те шухăшласчĕ.*

**Н. НИКИТИН,**
**Муркаш ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ.**

**Майăн 12-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери медицина сестрисен кунĕ**

### ХИСЕПЛĔ МЕДИЦИНА СЕСТРИСЕМ!

Сире професси уявĕпе – Пĕтĕм тĕнчери медицина сестрисен кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатăп!

Сывлăх – ҫыншăн чи хакли. Эсир ăна пире упрама вĕрентетĕр, чирлĕ ҫынсене сывалма пулăшатăр. Ҫакна валли тимлĕх те, чăтăмлăх та, чун ăшши те ҫитет сирĕн. Пĕр ăшă сăмахăр кăна мĕне тăрать: чуна йывăр вăхăтра лăпланма пулăшатăр, ҫынсене шанăҫ паратăр. Тавах сире ҫакăншăн.

Эсир малашне те ҫăмăл мар, анчах пархатарлă ĕҫре ответлăха туйса ĕҫлессе шанас килет. Чун-чĕре ăшши пурин валли те ҫиттĕрччĕ сирĕн.

Пурсăра та ҫирĕп сывлăх, телейлĕ те вăрăм кун-ҫул сунатăп.

**Район администрацийĕн пуҫлăхĕ**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотипе наградăланă

***Ял хуҫалăх производствинче нумай ҫул хушши тăрăшса ĕҫленĕшĕн район администрацийĕн пуҫлăхĕн 2011 ҫулхи апрелĕн 20-мĕшĕнчи 358 № йышăнăвĕпе ҫаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Елизавета Александровна АЛЕКСЕЕВĂНА**, Суворов яч. хис. хуҫалăхĕн Анаткассинчи сĕт-ҫу фермин пăру пăхаканне;

– **Галина Никандровна АЛБУТОВĂНА**, Суворов яч. хис. хуҫалăхĕн агрономне;

– **Слав Гаврилович МИХАЙЛОВА,** Суворов яч. хис. хуҫалăхĕн Ҫатракассинчи сысна фермин каҫхи хуралҫине.

**Патриотла воспитани**

## «Зарницăпа» «Орленок» вăййисем иртеҫҫĕ

Эрне кун, майăн 13-мĕшĕнче, район администрацийĕн ҫурчĕ умĕнче районти ҫамрăк армеецсен «Зарница» тата «Орленок» ҫарпа спорт ăмăртăвĕсем уҫăлаҫҫĕ. Икĕ куна тăсăлакан вăйăсене районти пур шкултан та хутшăнаҫҫĕ. Кăҫалхи вăйăсене пысăках мар улшăнусем кĕртнĕ. Пĕрремĕш кунне шкулсенчи «Зарница» командисем, иккĕмĕш кунне «Орленок» тата ҫарпа патриот клубĕсен командисем вăй виҫĕҫ. Кăҫалхи финал вăййисенче ачасен палаткăсенче шăнма тивмĕ: икĕ кунĕнче те вĕсем килĕсенчех ҫĕр каҫĕҫ. Конкурссем «Сывлăх» ФСК умĕнче, Муркаш шкулĕнче тата Малиновка лесничествин территорийĕнче иртмелли паллă.

Тахҫантанпах пыракан вăйăсем кашни шкул ачинех килĕшеҫҫĕ. Ачасем «Вăй тата ҫаврăнăҫулăх», «Шывра ишесси», «Теори блокĕ» тата ытти нумай-нумай конкурсра хăйсене тĕрлĕ енчен тĕрĕслеме пултараҫҫĕ-ҫке. Кăҫалхи ҫул ҫамрăксене валли ҫĕнĕ конкурссем те хатĕрленĕ. Вĕсен шутĕнче «Сочи – 2014» тата «Космонавтика ҫулталăкĕ» ятлисем те.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенчи ҫарпа патриот клубĕсем хушшинчи чи вăйлă та хастар команда, «Зарница» тата «Орленок» командисем республика вăййисенче район чысне хӳтĕлеме тивĕҫ пулĕҫ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Саламлатпăр**



Хаклăран та хаклă ҫыннăмăра, мăшăра, аннене – Муркаш ялĕнче пурăнакан **Людмила Михайловна РОМАНОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Ҫирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăҫу сунатпăр. Кун-ҫулу вăрăм та такăр пултăр. Ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Кĕрекӳ ҫăкăр-тăвартан нихăҫан та ан татăлтăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, Шапошниковсен, Замятинсен, Костинсен, Пахомовсен, Кольцовсен ҫемйисем.**



Ильинкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул директорне **Вера Федоровна ИЛЬИНАНА** 65 ҫул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-ҫул сунатпăр. Турă вăй-хăват патăр, кăмăлу яланах ҫĕкленӳллĕ пултăр. Сĕтелӳ ҫăкăр-тăвартан ан татăлтăр, ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, 5 мăнукĕ, ҫывăх тăванĕсем, юлташĕсем, шкул директорĕсем, пĕрле ĕҫлекен учительсем, выпускниксем.**

Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа – 66 çул

# Миномет расчечĕн командирĕ пулнă



Сăн ӳкерчĕкре эсир Апчар çыннине, 1924 çулхи майăн 30-мĕшĕнче çуралнă Николай Федоровича Ильина куратăр. Паян вăл пирĕн хушăра çук ĕнтĕ, 1997 çулта ăна тăванĕсем, ял-йыш юлашки çула ăсатнă.

Николай Федоровича хăйсен ялĕсем лайăх астăваççĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче вăл тăван хуçалăхра энергетикра ĕçленĕ. «Прожектор» хуçалăха та ертсе пынă. Пенсие тухиччен вара Лантăшри «Сельхозхимире» маçтăрта тăрăшнă.

Н.Ф. Ильина çара мобилизаци йĕркипе Амур çинчи Комсомольск хулинче 1942 çулта илнĕ пулнă. Вăл тинĕс çыран хӳтĕлевĕн 14-мĕш бригадине лекнĕ. 1943 çулччен Черкасскри пехота училищинче вĕреннĕ. Ăна вĕренсе пĕтеричченех июль уйăхĕнче Центрти фронта ăсатнă. 70-мĕш гварди дивизийĕн 207-мĕш полкĕнче миномет расчечĕн командирĕ пулса çапăçнă. Çĕнтерĕве кĕтсе илнĕ хыççăн та 1947 çулта тăван яла таврăнничченех хăйĕн служба тивĕçĕсене çавăнтах пурнăçланă. Вăрçă хирĕнче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Аслă Отечественнăй вăрçăн 2-мĕш степень орденне, 3-мĕш степень Мухтав орденне тата медальсене чылай илме тивĕç пулнă.

Мăшăрĕпе тăватă ывăлпа икĕ хĕр пăхса ӳстерсе ура çине тăратнă. Хисеплĕ çыннăн пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ – пуриншĕн те ырă тĕслĕх.

**Б. ЛЕДЕНЦОВ.**


«Моргаушский автомобильно-технический сервис»

Совет директоров открытого акционерного общества «Моргаушский автомобильно-технический сервис», расположенное в с.Моргауши, ул.50 лет Октября , д.23 сообщает о проведении общего собрания акционеров **8 июня 2011 года**.

Начало собрания **в 14.00 часов.**

Начало регистрации **в 13.00 часов.**

Место нахождения: ЧР, с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23.

Место проведения: Зал заседания административного здания ОАО «Моргаушскавтотехсервис».

Дата составления списка акционеров, имеющих право на участие в общем собрании акционеров: **30 апреля 2011 года.**

**Повестка дня**:

1. Избрание счетной комиссии.
2. Отчет о результатах финансово-хозяйственной деятельности ОАО и утверждение годового отчета, бухгалтерского годового отчета и баланса, счета прибылей и убытков, распределение прибыли за 2010 год.
3. Утверждение заключений по актам проверки ревизионной комиссии и аудитора.
4. Утверждение решения Совета директоров о дивидендах за 2010 год.
5. Избрание членов Совета директоров.
6. Избрание членов ревизионной комиссии.
7. Утверждение аудитора общества.
8. Ознакомление решениями заседания Совета директоров.

Каждый акционер, прибывающий на общее годовое собрание акционеров общества, должен иметь при себе паспорт.

С информацией (материалами), подлежащей предоставлению акционерам при подготовке к проведению общего годового собрания акционеров, можно ознакомиться до даты проведения собрания ежедневно, кроме выходных дней с 8.00 до 12.00 часов по адресу: с.Моргауши, ул.50 лет Октября , д.23, бухгалтерия.

**Совет директоров ОАО «Моргаушскавтотехсервис».**

**Информация**
**Открытое акционерное общество**
«МОРГАУШСКИЙ АВТОМОБИЛЬНО-ТЕХНИЧЕСКИЙ СЕРВИС»

Адрес:429530,Россия, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул.50 лет Октября,д.23.тел.62-7-90, факс(8241)62-7-90.

Стоимость чистых активов на 31.12.2010 г. - 8458 тыс. руб.

Размер уставного капитала на 31.12.2010 г. - 2995 тыс. руб.

Количество акционеров на 30.04.2011 г. - 187 чел. Специализированный регистратор: филиал «ОРК - Чебоксары» - ОАО «Объединенная регистрационная компания», лицензия ФКЦБ России №10-000-1-00314 от 30.03.2004г.

Адрес: 428018, Россия, Чувашская республика, г. Чебоксары, ул.К.-Иванова,д.79/16, офис 69 .тел. 58-39-38.

**БУХГАЛТЕРСКИЙ БАЛАНС (тыс. руб.) за 2010 г.**

| АКТИВ | На начало отчетного периода | На конец отчетного периода |
|---|---|---|
| **1. Внеоборотные активы** | | |
| Основные средства | 3628 | 3496 |
| **2. Оборотные активы** | | |
| Запасы | 3325 | 3373 |
| Дебиторская задолженность | 407 | 1111 |
| Денежные средства | 1835 | 635 |
| **БАЛАНС** | **9195** | **8615** |
| **ПАССИВ** | | |
| **3. Капитал и резервы** | | |
| Уставный капитал | 2995 | 2995 |
| Резервный капитал | 51 | 51 |
| Добавочный капитал | 7362 | 7362 |
| Нераспределённая прибыль(непокрытый убыток) | (1950) | (2871) |
| **5. Краткосрочные обязательства** | | |
| Кредиторская задолженность | 737 | 1078 |
| **БАЛАНС** | **9195** | **8615** |

**ОТЧЕТ О ПРИБЫЛЯХ И УБЫТКАХ (тыс. руб.)**

| Показатель | за 2010 год |
|---|---|
| Выручка (нетто) от продаж | 5958 |
| Себестоимость продаж | (6808) |
| Прибыль от продаж | (850) |
| Прочие доходы | 690 |
| Прочие расходы | (588) |
| Прибыль (убыток) до налогообложения | (748) |
| Иные обязательные платежи из прибыли | (173) |
| Чистая прибыль (убыток) | (921) |

Генеральный директор Л.Д. Дмитриев.

Главный бухгалтер Л.П. Иванова.

Достоверность бухгалтерского баланса и отчета о прибылях и убытках подтверждена аудиторской фирмой ООО «Н.И.К.А.Р-Ч» (член Некоммерческого партнерства «Российская Коллегия аудиторов», включенного в Государственный реестр саморегулируемых организаций аудиторов на основании приказа Минфина России от 22.12.2009 года № 675).


Шкул пĕтерекенсем валли

# Полиграфиста вĕренме май пур

Мускаври Федоров ячĕпе хисепленекен полиграфи колледжне 1929 çулта йĕркеленĕ. Кунта «Полиграфи производстви», «Издательство ĕçĕ», «Хутран тата картунран изделисем хатĕрлессин производстви», «Дизайн», «Реклама», «Экономика тата бухгалтери учечĕ» енсемпе пысăк класлă специалистсем вĕрентсе хатĕрлеççĕ. Колледжра бюджет, тĕллевлĕ килĕшӳ тата коммерци мелĕсемпе вĕренме май пур. 9-мĕш тата 11-мĕш классенчен вĕренсе тухнисене йышăнаççĕ. Кăнтăрлахи уйрăмра тата заочно мелпе вĕренме пулать. Заявленисене июнĕн 15-мĕшĕнчен тытăнса июлĕн 31-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Адресĕ: **Мускав хули, Ярославское шоссе, 5-мĕш çурт, e-mail:mipk@rambler.ru; www.mipkif.ru, тел./факс 8(499) 188 17 48, йышăну комиссийĕ.**

Пирĕн пата çыраççĕ

# Тав тăватпăр

Каршлăхри вăрçăпа ĕç ветеранĕсен интернат çуртне хăйсен «Мăн кун программипе» килсе çитрĕç уяв эрнинче Катькасри пуçламăш шкул-ача сачĕн вĕрентекенĕсемпе вĕренекенĕсем. Вĕсем пирĕн ватăсене хăйсен пултарулăхĕпе чăннипех те тĕлĕнтерчĕç. Вĕренекенсем юрланă юрăсем те Христос Турă çинчен пулчĕç, кашнинех Мăн кун çăмарти валеçсе пачĕç, ватăсене хăйсен аллипе ӳкернĕ ӳкерчĕксем парнелерĕç.

Çакăн пек ырă ĕçшĕн Катькасри пуçламăш шкул-ача сачĕн ĕçченĕсене, вĕсен директорне Л.П. Сергеевăна пысăк тав сăмахĕ калас килет. Вĕсене çитĕнӳсем, ырлăх-сывлăх сунатпăр.

**В. КРЮЧКОВА,**
**Каршлăхри вăрçăпа ĕç ветеранĕсен интернат çурчĕн социаллă ĕçсен специалисчĕ.**

# Чăваш кĕввиллĕ Муркашри Самар чăвашĕ



Вăл е ку артист сцена çине тухсан чи малтан хăйне епле тытнипе, юррипе, юрлама пĕлнипе киленетпĕр. Çапла вĕт? Чылай чухне вара çав юрра «çуратакансем» çинчен пĕлмесĕрех юлатпăр. Чуна тыткăнлакан сăвă авторĕ, çав йĕркесене илемлĕ кĕвĕпе çунат параканĕ кам? Кун пирки шутламастпăр та тепĕр чух. Тĕрĕссипе вара вĕсемсĕр çав артист сцена çине ку юрăпа тухаймастчĕ те, хăйĕн пултарулăхĕпе тĕлĕнтерейместчĕ те. Аслă Çĕнтерӳ кунĕнче каçхи концерта та яланхи пекех Муркашри «Расна» халăх ансамблĕ хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарчĕ куракансене. Юрăçисем те чуна килĕшмелле юрлаççĕ, ташăçисенчен те куç илес илмест. «Раснана» мĕн йĕркеленсе кайнăранпах килĕштерчĕ куракан. Унти чăваш халăх юррисем те, ташă çеммисем те урăхларах, илемлĕрех янăраççĕ. Хăйне евĕрлĕхĕпе чуна тыткăнлаççĕ вĕсем. Вĕсене паянхи майлă илемлетекенĕ вара шăпах Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (2005 ç.), Оринин тăрăхĕнче пурăнакан Валерий Ильдяков. Асăннă коллектив ертӳçи пулнă май вăл халăх юратăвне ан çухаттăр тесе сахал мар тимлеме тивет унăн. Коллективпа тăрăшни сая каймасть вăл. 2006 çулта «Расна» Чулхулара иртнĕ «Раççейĕн асамат кĕперĕ» фестивале хутшăнчĕ, диплома тивĕçрĕ.

Паян Валерий Петровича таврара пĕлмен çын çук та пулĕ. Муркаш тăрăхĕнче вара ăна «Раснана» йĕркеличчен чылай маларахах пĕлме пуçларĕç. 1991 çултан пуçласа паян кун та Орининти Культура çурчĕ çумĕнчи «Шуракăш» халăх ансамблĕнче баянист пулса ĕçлет. Çак хушăра мĕн чухлĕ юрă кĕвĕлемерĕ-ши? Мĕн чуль ташăпа сюита валли илемлĕ çемĕ «çуратмарĕ-ши? «Лапкас ташши», «Тăххăрла», «Орининла», «Палантай» ташăсем, «Сикеч кӳл кĕввисем», «Варук», «Юрату кĕперĕ» тата ытти сюитăсем валли. Коллектив Тюмень облаçĕнче те, Пушкăрт, Тутар Республикисенче, Самар облаçĕнче те савăнтарма ĕлкĕрчĕ хăйĕн пултарулăхĕпе. Иртнĕ çул вара Беларусь Республикинче те пĕлчĕç Муркаш тăрăхĕнчи «Шуракăш» пирки. Вĕсене хапăл туса кĕтсе илсе çав тери кăмăллăн ăсатрĕç унтан. Асăннă коллективăн ячĕ-сумĕ сарăлни вара кунта нумай çул хормейстер пулса ĕçлекен Владимир Александров, балетмейстер пулса ĕçлекен Сергей Каликов, Валерий Ильдяков баянист пултарулăхĕпе уйрăлми тачă çыхăннă.

Баян тенĕрен, мĕн хăйне пĕлме пуçланăран варах Валерий Ильдякова пурнăçра купăс сасси вăй парса тăрать. Куйбышев (Самар) облаçĕнчи Похвиçне районĕнчи Анат ялне (1961 çулхи июнĕн 21-мĕшĕнче çакăнта çуралнă вăл) юлашки вăхăтра час-час кайса çӳреймесен те пурнăç кĕвви ун унтанах, тăван ялтанах пуçланчĕ. Хăть мĕнле уяв пулсан та пĕчĕк Валерие унта амăшĕ пĕрле илсе каятчĕ. Ывăлĕ музыкăна килĕштернине амăшĕ мĕнле ан систĕр-ха? Куçĕсем вара, куçĕсем купăс çинчен каймастчĕç. Çак тӳмесенчен мĕнле-ха çавăн пек илемлĕ кĕвĕ тухма пултарать вара? Çак тата ытти ыйтусем кунран кун канăç пами пулчĕç ăна. Тытса пăхас килетчĕ купăсне, выляса пăхас килетчĕ.

Ĕмĕчĕ пурнăçа кĕчĕкĕчех. Валерин пĕчĕк юбилейне – 10 çул тултарнă тĕле ашшĕпе амăшĕ Петр Ивановичпа Елена Филимоновна ăна чăн-чăн купăс парнелерĕç. Ывăлĕ çак парнене курсан ниçта кайса кĕрейми савăнчĕ. Купăса алла илмесĕр пĕр кун та иртместчĕ. Вăл вăхăтра паллă юрăсен кĕввине кăларма тăрăшатчĕ вăл. Хăшĕ пулатчĕ, хăшĕ пулмастчĕ. Хăй вара çав тери савăнатчĕ. 7 класра чухне амăшĕ Валерие район центрĕнчи музыка шкулне вĕренме ячĕ. 1977 çулта баян класĕнчен вĕренсе тухать Валерий.

Чăваш кĕввине юратни ăна çав çулах Шупашкарти Федор Павлов ячĕллĕ музыка училищине илсе çитерет. Ачасен музыка шкулĕнче вĕреннĕ чухнех «Ма хитреши Шупашкар урамĕ?» юрра грампластинкăпа кунне миçе хутчен итлемен пулĕ? Пурнăç çулне урăх мĕнпе те пулин çыхăнтарма-и унта? Шăпах çав вăхăтра шутларĕ те Валерий: «Шупашкара музыка училищине каймалла».

Унта вĕреннĕ çулсем вара (1977–1981 çулсем) пĕр сисĕнмесĕрех иртсе каяççĕ. Пултаруллă специалиста тӳрех Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамбльне баянист пулса ĕçлеме яраççĕ. Коллективпа пĕрле Рига, Таллин, Вильнюс, Кишинев, Орел, Тула, Курск тата ытти хуласене гастрольпе тухса çӳрерĕç.

Салтак тумне тăхăнсан та юратнă ĕç çумран каймарĕ. Куйбышеври ПриВО юрăпа ташă ансамблĕнче иртет унăн салтак пурнăçĕ.

1985 çулта вара Валерий Ильдяков «Сувар» халăх ансамблĕн баянисчĕ пулса тăрать. Мĕн чухлĕ пулмарĕ-ши асăннă коллектив çĕр-шыв тăрăх гастрольте? Мĕн тĕрлĕ конкурса, фестивале хутшăнмарĕ пулĕ? Дмпломĕсене шутласа та кăлараяс çук пулĕ. Çак ăнăçура вара Валерий Петровичăн тӳпи те çителĕклех. Мĕн чуль ташă валли кĕвĕ çырмарĕ пулĕ вăл? Уйрăмах халăхра вăл çырнă кĕвĕллĕ «Лапти и заслонка», «Девичья плясовая», «Мужской танец», «Сельская молодежь», «Виръял хĕрĕ», «Ахаяс» ташăсене юрататчĕç. 1989 çулта «Сувар» Венгрире те пулчĕ. Çавăн пекех Кремльти съездсен керменĕнче те хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарчĕ куракансене.

Халĕ те астăваççĕ-ха, юратаççĕ Чăваш Республикин композиторсен ассоциацийĕн членĕ Валерий Ильдяков кĕвĕленĕ «Тăван хуламăр Шупашкарăм», «Силпи чечекĕ», «Сан куçусем» тата ытти юрăсене. Çамрăксен театрĕн репертуарĕнчи «Пăнтăр-пăнтăр балалайка» (1988), «Таркăн» (1989), К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи театрĕ лартнă «Çитăр качаки» спектакльсенче те Валерий Ильдяков композитор кĕвĕленĕ юрăсем янăратчĕç.

Паян та Муркашри Самар чăвашĕ каçсерен илемлĕ кĕвĕ тĕнчинче çĕнĕ çемĕсем шырать. Чуна тунсăх пусса килсен лирика тĕнчи тăрăх тухакан çулçӳрев чунне канăç кӳрет.

Сăвва та, кĕвве те халь ларса çыратăп-ха теме çук. Шалтан тухмасан çав илемлĕх туйăмĕ, пĕр йĕрке те, пĕр нота та кирлĕ пек пулмасть.

– Кĕвĕ чуна хăçан килессине чун хăех сисет, туять, – тет Валерий Петрович хăй кун пирки. – Чунра юрату пулсан кĕвĕ пуçа килетех. Пурнăçа юратсан, çывăх çынсене юратсан. Юрату пĕлтерĕшĕ анлă вĕт. Сăмахпа каласа парайми, нихçан алла тытма çук сăмахпа каласа парайми асамлăха юратмалла çыннăн, ун патне вĕçĕм туртăнмалла.

Чуна йывăр чухне вара Валерий Петровича амăшĕн сăнарĕ пулăшать.

– Аннеçĕм, эх, эс çумра пулсанччĕ, тетĕп те – чуна темле çăмăл пулса каять. Хама анне пулăшнине, вăл çумрах пулнине туятăп, - ассăн сывлать Валерий Петрович.

Унтан эпĕ, эсир кашниех çитĕнсе çитсен кăна ăнланакан шухăша каласа хурать:

– Ача чухне анне, атте нихăçан та пирĕнтен уйрăлассăн туйăнмастчĕç. Вĕсем ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пулассăн туйăнатчĕ. Хăйсем çук чух вĕсем пире мĕн тери кирлине, вĕсем çитменнине чун-чĕрепе нихçанхинчен ытларах ăнланатăн.

Туртса ярать те çакăн пек чуна тунсăх пуснă вăхăтра баянне Валерий Ильдяков, йывăр шухăшсем хăйсемех пĕчĕккĕн сирĕлеççĕ асамлă кĕвĕ тухса пынăçем. Çавăн пек чухне вара ăна хăйĕн пĕтĕм пурнăç ĕмĕчĕ çитнĕ пек туйăнать: «Чăваш юрри-кĕвви ĕмĕрех янăратăрччĕ», – тет Валерий Петрович. Чăваш кĕвви мĕн тери илемлине çитĕнекен ăрăва шăпах халăх юрри-кĕввин асамлăхĕ урлă кăтартма тăрăшать те В. Ильдяков. Чăваш юррисене, халăх юррисене илемлетессипе те нумай ĕçлет вăл. Çак ĕçре ăна килте мăшăрĕ Тамара тата икĕ хĕрĕ Росинăпа Кристина пулăшса пыраççĕ, хăйсен юратăвĕпе, ăнланăвĕпе. Денис мăнукĕ вара кукашшĕ чĕрçи çине кĕрсе ларать те – чуна татах та лайăх пулса каять. Кукашшĕн ĕç пӳлĕмĕнче унпа пĕрле нумай вăхăт иртерет ача.

Апла пулсан Валерий Петровичăн ĕмĕчĕ пурнăçланать. Мăнукĕ унăн пултарулăхĕпе интересленет. Вăл çырнă, илемлетнĕ кĕвĕсене халăх юратса йышăнать. Апла пулсан пурнăçа илемлĕ кĕвĕ тĕнчипе çыхăнтарни ахаль пулмарĕ: çитĕнекен ăру ăша хывса çав илемлĕ чăваш кĕввин çеммипе ӳсет. Çав илемлĕ кĕвĕре вара – атте-анне пире парнеленĕ хаклăхсем: пĕр-пĕрне юратни, хисеплени, йывăр чухне пĕр-пĕрне пулăшмалли, телей укçара пулманни...

Валерий Петровичăн çак нимле усал вăй çĕнтерейми мен илемлĕ кĕвĕ тĕнчинчи çулĕ такăр пултăрччĕ, пултарулăх ĕçĕ ăнса пытăр малалла та.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Улăх-çарана хăнăхтарасси çинчен

**Специалист сăмах илет**

***Мал ĕмĕтпе пурăнакан ял çынни паян çурхи ака-суха ĕçĕсенче вăй хурать. Умра мĕн акни-лартнине таса-сывă пăхса ӳстересси, утçине хатĕрленесси тата выльăх апачĕ ытлă-çитлĕ хатĕрлесси. Ку вăхăтра уй-хирсемпе улăх-çарансем трактор-машина шавĕнчен пушанаймаççĕ те. Курăк тапраннине кура выльăх-чĕрлĕхе улăх-çарана кăлармалли вăхăт та çитрĕ. Çу кунĕсем çывхарнă май выльăхсене улăх-çаранта çӳретмесĕр вĕсен продуктивлăхне тивĕçлĕ ӳстересси, пăрусем илесси тата выльăхсен сывлăхне çирĕплетесси иккĕленӳллĕ.***

Ĕнесене улăх-çарана кăларасси – пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрлех ял çыннисемшĕн те чăтăмсăр кĕтнĕ вăхăт. Вĕсем çак вăхăт хăйсен килти хушма хуçалăх экономикишĕн пĕлтерĕшлĕ пулнине, выльăхсен сывлăхĕшĕн усăллине, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен тĕрекне вăйлатмаллине ăнланаççĕ. Кунсăр пуçне выльăхсем çарана тухсан вите-сарайсене кантарма, вĕсенче юсав ĕçĕсем ирттерме, çĕнĕлĕхсем кĕртме пулать. Анчах ял çыннисен çак тапхăра хатĕрленнĕ май малтанах картара утă-улăм мĕн чухлĕ юлнине шута илмелле. Çакă выльăхсене симĕс курăк çине кăларса апатлантарăва улăштарнă вăхăтра уйрăмах кирлĕ, мĕншĕн тесен нумай хуçалăхра майракаллă шултра выльăхсем çăва начарлансарах тухаççĕ. Уйрăмах кăçал. Çак вăхăтра вырăнсенчи специалистсем кашни выльăхпах диагностика тĕпчевĕ, профилактика прививкисем, тĕрлĕ хуртсене эмел парса пĕтерес ĕçсем тата ерекен чирсемпе кĕрешмелли плансемпе килĕшӳллĕн ветеринарипе санитари мероприятийĕсем пурнăçлаççĕ.

Асра тытмалла, ĕнесене улăх-çарана кăларас умĕн агрономсемпе зоотехниксен çав вырăнсене пăхса тухса актпа хак памалла, пĕрле пулса çарансене темиçе ана çине пайламалла. Вĕсемпе черетпе усă курссине пурнăçа кĕртсен сĕт памалли ĕнесем валли тăтăшах çемçе курăк пулĕ. Улăх-çарана тĕрлĕ ăпăр-тапăрпа тултарса лартасран тăтăшах пăхса тăмалла, вăхăтра тасатмалла. Унта наркăмăшлă япаласемпе минераллă удобрени миххисем пуласран питĕ сыхланмалла. Выльăхсем улăха тухмалли çулсене, вĕсем çинчи кĕперсене кая юлмасăр юсамалла, улăхсенчи шурлăхлă вырăнсене паллă тумалла, ĕнесене шăвармалли вырăнсене тирпейлемелле тата унти шыва ĕнесем тухиччен лабораторире тĕрĕслеттермелле, выльăхсен кăнтăрлахи кану вырăнĕсемпе çуллахи лагерĕсене йĕркелемелле.

Улăх-çарана тухас умĕн выльăхсем тĕлĕшпе ветеринарсемпе зоотехниксен тĕрĕслевне ирттермелле, вăйлăрах тăрантармалли выльăхсене уйрăм ушкăнсене пĕрлештермелле. Çулленхи практика çакна çирĕплетсе парать: ĕнесене хĕллехи рационтан (протеинпа чухăн та клетчаткăпа пуян) çуллахи сĕтеклĕ апат çине куçарнă тапхăрта вĕсен вархырăмĕ час-часах пăсăлать. Çавна пула сăвăм, сĕтри çу хисепĕ чакать. Çапла ан пултăр тесен ĕнесене ир-каç утă-улăм çителĕклĕ памалла, микро- тата макроэлементсемпе, тăварпа ытлă-çитлĕ тивĕçтермелле.

Ĕнесене улăх-çарана хăнăхтарасси – васкамасăр пурнăçламалли ĕç. Малтанхи икĕ кунĕнче ĕнесене улăхра 2-3 сехетрен ытла çӳретмелле мар. Тепĕр эрнерен çак вăхăта 10-12 сехете çитерсен те юрамалла. Çак тапхăрта пăру-тынашкасем, пăруламалли ĕнесем, хĕл каça ытларах начарланнă тата чирлесе ирттернĕ выльăхсем тĕлĕшпе тимлĕрех пулмалла. Çăва тухнă май выльăхсене симĕс апата майĕпен хăнăхтарса пыни продуктивлăха тивĕçлĕ шайра упраса хăварма пулăшать.

Маларах каланине шута илсен ĕнесене улăх-çарана кăлармалли вăхăт çывхарнă май хуçалăхсенче кĕтӳçсем хатĕрлесси малти вырăна тухать. Куçару тапхăрĕнче кĕтӳçсем ĕнесене пĕрремĕш пулăшу пама пĕлни вырăнлă. Çакна валли вĕсене медицина аптечкипе, троакарпа, ытти хатĕрсемпе тивĕçтермелле тата вĕсемпе усă курма вĕрентмелле. Хăй ĕçне лайăх пĕлекен кĕтӳç – зооветспециалистшăн пысăк тĕкĕ.

Кĕтӳç кĕтӳçпе те, анчах выльăхсене улăх-çарана кăларнă тапхăрти пĕлтерĕшлĕ профилактика мероприятийĕсенчен пĕри вăл – выльăхсене çĕпĕр язвинчен, эмкартан, ытти инфекциллĕ чирсенчен вăхăтра вакцинăласси. Прививкăсене майракаллă шултра выльăхсене, сурăхсемпе качакасене, лашасене çур çул хушăпа çулталăкне икĕ хут тумалла: пĕрремĕш тапхăрĕ – çуркунне выльăхсене çарана кăлариччен, кайран – выльăхсене витене хупнă чух. Эмкартан выльăхсене улăха илсе тухиччен 2 эрне маларах профилактика прививки тумалла (çак вăхăтра активлă иммунитет çирĕпленет). Улăха тухакан ĕнесен чĕрнисене, майракасен шĕвĕр вĕçĕсене касмалла.

Выльăхсене улăх-çаранта çӳретес тапхăр вăл – йӳнĕрех хăйхаклăхпа ытларах продукци илмелли, кунпа пĕрлех вите-сарайсене çитес хĕле хатĕрлемелли ăнăçлă вăхăт. Çакна шута илсе выльăхсене кĕтĕве е çуллахи лагерьсене кăларсан пĕрремĕш кунранах вите-сарайсене çитес хĕле хатĕрлеме пуçламалла. Ăшă çу кунĕсем хăвăрт иртĕç.

**А. ФЕДОРОВА,**
**выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин ветврач-терапевчĕ.**

**Çур аки – 2011**

# Тулли хăватпа ĕçлеççĕ



Çулпа çул пĕр килмест теççĕ те кăçалхи çут çанталăкăн та хăйĕн уйрăмлăхĕсем. Çакна çĕр ĕçченĕ асра тытса уй-хир ĕçĕсене пуçăнчĕ.

– Пирĕн патăмăрта ĕçлекенсем никам та паянхи кунпа пурăнмасть. Акă çур акине хатĕрленме те кĕркуннех пуçларăмăр, хĕл кунĕсенче тăрăшса ĕçлерĕмĕр. Çавăнпа та паян пирĕн техника хирте, ĕç условийĕсем паллă, сĕрмелли-çунтармалли материалсем çителĕклĕ. Ĕçре сиксе тухакан кашни шăйрăках вăхăтра пĕтересси – пирĕн умри тĕп тĕллев, – терĕ Владимир Николаевич Королев электрогазосварщик **(сăн ӳкерчĕкре)**. Эпир çитнĕ чух вăл «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин мехпаркĕнче тимлетчĕ. «Кунта кашни ĕçĕн пĕлтерĕшĕ пур. Йăлтах асра тытаççĕ те çанă тавăрса ĕçлеççĕ, çĕнĕ ĕмĕтсене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшаççĕ», – вĕлтлетрĕ пуçра шухăш.

Механизаторсемпе калаçнинчен техникăна ĕçе хатĕрлесси фабрикăра йывăр ыйту пулманни палăрчĕ. Çавăнпах ĕнтĕ ĕçе хатĕрленĕ тракторсем те палăртнă графикпа 100 процентчĕпех техника тĕрĕслевĕ витĕр тухрĕç.

...Эпир электрогазосварщикпа калаçнă хушăра кӳршĕри трактор кĕрлесе ĕçлесе ячĕ. Фабрикăн кăçал кĕрхи культурăсене 260 гектар çинче апатлантарса нӳрĕк тытса хăвармалла. Çуртрисем 300 гектар йышăнĕç. Вăл лаптăксенче вара иртнĕ кĕркуннех çĕртме сухи туса хăварнă.

**А. БЕЛОВ.**

**Отчет**

УТВЕРЖДЕН
Наблюдательным советом
22 марта 2011 г.
Протокол № 2

**ОТЧЕТ**
**о деятельности автономного учреждения Чувашской Республики, функции и полномочия учредителя которого осуществляет Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики**
**Автономное учреждение Чувашской Республики «Редакция Моргаушской районной газеты «**Çĕнтерӳ ялавĕ**» («Знамя победы») Министерства культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики**
**за 2010 отчетный год**

| № п/п | Наименование показателя деятельности | Единица измерения | 2009 год | 2010 год |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Исполнение задания учредителя | % | 111 | 101 |
| 2. | Перечень видов деятельности, осуществляемых автономным учреждением Чувашской Республики | | Поиск и сбор информации о деятельности органов государственной власти и местного самоуправления, общественных объединений в различных сферах общественной, политической и экономической жизни в установленном законом порядке для публикации в газете; издание, распространение через почту, альтернативным способом в учреждении, через киоски и реализация газеты, вкладышей и приложений к ним; производство и тиражирование газеты; проведение различных конкурсов, викторин и соревнований как одного из средств стимулирования активности и интереса населения к районной газете; оказание информационных и рекламных услуг юридическим и физическим лицам, населению; производство и реализация полиграфической продукции, копировально-множительные, переплетные, брошюровочные работы; оказание посреднических услуг в сфере своей основной деятельности; осуществление издательской и информационной деятельности. | |
| 3. | Осуществление деятельности, связанной с выполнением работ или оказанием услуг в соответствии с обязательствами перед страховщиком по обязательному социальному страхованию | % | 100 | 100 |
| 4. | Общее количество потребителей, воспользовавшихся услугами (работами) автономного учреждения Чувашской Республики | человек | 4863 | 6069 |
| | в том числе: | | | |
| | бесплатными | человек | | |
| | в том числе по видам услуг (работ): | человек | | |
